**Шурă лĕпĕш**

Вĕçрĕ, вĕçрĕ çăмăл лĕпĕш,
Сан кĕпӳ пек шурăскер.
Вĕçрĕ, çаврăнчĕ ыр пĕлĕш,
Анчĕ ал çине чипер.

Тытрăм çепĕç, амантмарăм
Çут тусанлă çунатне.
Куç тулли савса сăнарăм
Пăчăр-пăчăр тĕррине.

Хăй те ларчĕ питĕ шăпăрт
Тем ăнланнă пек пулса.
Хушăран çеç чăпăрт-чăпăрт
Çунатне уçса-хупса.

Алтупань çине лартайрăм,
Ыр сунса пуçа таяйрăм:
«Вĕç, çӳре, сăпайлă чун!..»
Сан кĕпӳ пек тĕсĕ ун.

*Канаш, А. Шурă лĕпĕш / А. Канаш // Чăваш литературин антологийĕ. – Шупашкар, 2013. – [Т. 2] : Поэзи. – С. 317.*